27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ЯНВАРЬ
13
ШАМАТКУН
8(6759) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАСАЧĔ

Комсомол организацисен отчетпа суйлав кампанине большевикла ирттерер

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, январĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа комсомолăн республикăри организацинче отчетпа суйлав пухăвĕсем тата конференцисем пулса иртеççĕ. Комсомол организацийĕсем çак отчетпа суйлав кампанийĕсем çăк ĕçĕнче чылай пысăк çитĕнӳсем туши кĕтсе илеççĕ.

Комсомол, большевиксен партийĕн помощникĕ пулса тăрса, Тăван çĕршыв пурнăçĕнче палăк вырăн йышăнать. Комсомолецсем Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче фронтра та, тылра та паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса пычĕç. Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрленĕ, комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене организацилени, çамрăксем производствăри йывăр профессисене вĕренсе алла илни, производствăра перекетлĕхшĕн кĕрешни, тырпул тухăçлăхне ӳстермелли мероприятисене пурнăçа кĕртесшĕн тăрăшни, Хĕрлĕ Çар валли вăрçă техники тума укçа-тенкĕ пухни тата ытти те,—çак ĕçсенче пуринче те комсомолецсем яланах малти ретре пыраççĕ. Ку ĕнтĕ çамрăксен патриотла туйăмĕ пысăк пулнине кăтартса парать.

Комсомол организацисенчи отчетпа суйлав пухăвĕсемпе конференцисене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çулĕ вырăнта тата самокритикăпа анлăн сарса пырса ирттермелле. Комсомол организацийĕсем ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш Пленумĕ йышăннă постановленине тата ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн Чăваш республикинчи организацийĕн ĕçĕсем çинчен йышăннă решение мĕнле пурнăçа кĕртнине отчетпа суйлав пухăвĕсенче тĕплĕн тишкерсе тухмалла. Отчетпа суйлав пухăвĕсенче çавăнпа пĕрлех комсомол умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма татăклă мероприятисем палăртса хăвармалла.

Отчетпа суйлав пухăвĕсене тата конференцисене лайăх ирттерес тесен, вĕсене ирттерме малтанах тĕплĕн хатĕрленни кирлĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерме комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене пулăшма ВЛКСМ хула комитечĕсемпе райкомĕсен представителĕсене ямалла.

Комсомолăн ертсе пыракан органĕсене суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе ревизи комиссийĕсем çинче пысăк ответлăх тăрать. Вĕсен комсомолецсене хăйсен комсомол организацисене мĕнле пулăшни тата ВЛКСМ уставне пурнăçа кĕртессишĕн мĕпле тăрăшни, комсомолецсен производствăпа вĕренӳри вырăнне çĕкленсишĕн мĕнле кĕрешни çинчен калаçса памалла.

Комсомол комитечĕсен тата ревизи комиссийĕсен отчечĕсене вĕсен ĕçне тĕплĕн тишкерсе тухни тăрăх тумалла. Йăл отчетсенче комсомолецсем производствопланне тултарма, колхозсене вăйлă тырпул туса илме мĕнле пулăшни çинчен калаçа памалла. Отчетсенче ВЛКСМ членĕсем уставăмĕнле пурнăçа кĕртнине тĕплĕн палăртмалла, çавăн пекех тата комсомол организацисенче çарпа физкультура ĕçне, çамрăк ăрăва воспитани парас ĕçе мĕнле организацилесе пынине тĕплĕн кăтартса памалла. Отчетсене çырас ĕçе актива анлăн вăй тарас пулать. Комсомолăн первичнăй организацисен отчечĕсене пуçламĕш организацисен комитечĕсенче, ВЛКСМ райкомĕсен отчечĕсене ВЛКСМ райкомĕсен пленумĕсенче пăхса тухса çирĕплетмелле.

Отчетсене çырас ĕçе актива йытăрах вăй тарсан, вĕсем комсомол организацисен ĕçне тĕплĕрехчĕн тишкерсе тухма пулăшаççĕ. Отчетсене çырса хатĕрленĕ вăхăтра комсомол хуçалăхне, комсомол организацийĕсенче член укçине тӳлесси вирки йышăннă решение мĕнле пурнăçланнине, комсомол организацисенче ыйтусене пăхса тухас ĕçе мĕнле йĕркеленине, комсомол ячейкисем çамрăк рабочисемпе колхозниксен тата интеллигентсен ыйтăвĕсене мĕнле пурнăçланнине, комсомол организацисем актива ĕçе мĕнле явăçтарнине тишкерсе тухмалла. Комсомол организацийĕсен руководителĕсен çакна асра тытас пулать: комсомол организацийĕсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсене тĕплĕн хатĕрленсен кĕна ăнăçлăн ирттерме пулать. Çавăнпа та комсомол организацийĕсен пурин те çак пысăк та ответлă ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерес ĕçе кашни комсомолеца активлăн явăçтармалла. Комсомолецсем пурте активлăн хутшăнса ĕçлесен кăна суйлавсене лайăх ирттерме пулать. Отчетпа суйлавсене лайăх организацилесе ирттерни комсомолецсене дисциплинăна пăхăнма, хушнă ĕçе вăхăтра пурнăçлама вĕрентет. Çавăнпа та ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсен тата комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсене мĕнле ирттересси çинчен малтанах тĕплĕн шутламалла. Пухусем ирттерме çуртсем, суйлавсем валли ещĕкем хатĕр пулччăр, пухусемпе конференцисенче пулакансен куль турăлă ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерме майсем пулччăр.

Комсомол организацисенчи отчетпа суйлав кампанине ирттерес ĕçре районсенчи тата заводсенчи хаçатсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Вĕсен пуçламĕш организацисенче тата районсемпе хулари организацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсемпе конференцисем мĕнле ирттинçинчен тĕплĕн сутăсем тăмалла. Лайăх ĕçлекен комсомол организацийĕсен опытне кăтарса памалла, комсомолецсене умра тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилеме пулăшмалла.

Комсомол организацисенчи отчетпа суйлавсене ăнăçлăн ирттерес тесен, ВЛКСМ уставне çирĕплĕн пурнăçа кĕртни тата критикăпа самокритикăна анлăн сарса пыни кирлĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕсем комсомолсенсемшĕн шкул пулса тăраççĕ. Вăл пухусенче комсомолецсем хăйсен пĕлĕвĕне пултарулăхне ĕçе пама вĕренеççĕ. Çавăнпа та ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсен, комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсене комсомолецсене пурне те явăçтармалла тăвас пулать.

ВЛКСМ пуçламĕш организацисене, комсомол комитечĕсене, райкомĕсемпе хула комитечĕсене ертсе пырас ĕçе политика тĕлĕшĕнчен малта пыракан, пултарулăх тата ĕçре палăрнă комсомолецсене суйласа партăмалла. Çамрăк комсомолецсене ĕçе хăюллăн явăçтарас пулать. Вĕсене ĕçе явăçтарнă хыççăн кулленхи ĕçре пулăшса пымалла.

Комсомол организацисенчи отчетпа суйлавсене ăнăçлăн ирттересси парторганизацисем пулăшнинчен нумай килет. Парти организацийĕсен комсомола куллен пулăшса çул кăтартса пымалла. Комсомолăн вăйĕ—парти организацийĕсем ертсе пынине. Çакăн çинчен пĕр минутăха та манма юрамасть.

Комсомолăн ертсе пыракан органĕсен отчетпа суйлав кампанине ăнăçлăн ирттерер, комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçе пултарулăх комсомолецсене суйласа хăварар!

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисем хатĕррине пăхса тухасси

ВЦСПС секретариачĕ тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕç мĕнле пынине профсоюзсем пăхса тухасси çинчен постановлени йышăннă.

Январь уйăхĕнче пур çĕрте те рабочисен тата инженерсемпе техниксен пухăвĕсем пулса иртмелле. Тракторсене юсас ĕçе хутшăнма рабочисене, чи малтан—слесарьсене, токарьсене, тимĕрçĕсене, сварщиксене, трактористсене, комбайнерсемпе механиксене социализмлă ăмăртăва хутшăнтармалла. Малта пыракан рабочисене кашни уйăх вĕçĕнчех «Хисеп кĕнеки» çине тата «Хисеп хăми» çине çырса хумалла.

Тракторсемпе машинăсене юсанă вăхăтра уйăхра 2—3 хутран кая мар производствăлă канашлусем туса ирттермелле. Вăл канашлусенче юсав пăхалăхĕ çинчен, уйăм бригадăсем графика пурнăçлани çинчен, инструментсене, запаслă пайсене тата материалсемпе чĕртавара лайăх упраса, вĕсемпе тĕрĕс усă курни çинчен сӳтсе явмалла. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисем хатĕррине тата вĕсене мĕнле усранине пĕрремĕш кварталта совхозсемпе МТС, çенчи рабочисемсен массăсемпе пĕрле пăхса тухмалла. Профорганизацисен рабочисене, инженерсемпе техниксене тракторсемпе машинăсене юсамалли плана пурнăçа кĕртсе пынăшăн парнелемелли йĕркене çирĕнлĕн ăнлантарса памалла.

Профсоюзсен Центральный Комитечĕсене совхозсемпе МТС-сене пыракан рабочисене тата ремесло шкулĕсемпе ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсене тивĕçлĕ условисем туса пама хушнă. (ТАСС).

ЛЕНИН МУЗЕЙĔН ФИЛИАЛĔН ЭКСПОНАЧĔССЕНЕ ЛЕНИНГРАДА КАЯЛЛА ИЛСЕ ПЫНА

Ленинграда Ленин музейĕн филиалĕн экспоначĕсене каялла илсе пынă. Вĕсене блокада вăхăтĕнче унтан куçарнă пулнă.

Рылов, Владимиров, Серов, Кузнецов ӳкерчĕкĕсем, тĕрлĕ документсем, «Искра», «Вперед» хаçатсем, кĕнекесем тата Владимир Ильичăн ăпалисем пырса çитнĕ.

Музей филиалне пырса çитнĕ ăпаласене пăхса тухса йĕркелесе хума пуçланă. (ТАСС).

КУЛЛЕНХИ НОРМАСЕНЕ ИРТТЕРСЕ ТУЛТАРАÇÇĔ

ПЕПРЕÇ. Куçти варман хуçалăхĕнче ĕçлекенсем чугун çул валли вутă хатĕрлеççĕ. Çак ĕçре уйăрмăх Чкаловски районран килнĕ колхозниксем тухăçлăн ĕçлеççĕ. «РОКК» колхозран янă колхозниксем А. Карягина, М. Арланова, Е. Салмина тата М. Савельева юлташсем куллен 4—5-шер кубометр вутă турттараççĕ. Çавăнпа вĕсем вăрман хуçалăхĕн директийĕпе пилĕкшер метр мануфактура парса премилерĕ.

«РОКК» колхоз членĕсен лайăх примĕне вăрманта ĕçлекенсем ытти çĕмĕ ĕçлеççĕ. Вутă турттаракансем М. Ашмарина, Н. Краснов, А. Думилина, А. Ярусова юлташсем, Роза Люксембург ячĕпе тăракан колхозран пынăскерсем, кулленхи нормăна 200 процент тултараççĕ.

«Кзыл Тан» колхоз членĕсем Г. Шарафутдинова, Р. Камалова, Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Е. Пыркин, Н. Савдеев юлташсем те çавăн пекех тухăçлăн ĕçлеççĕ.

М. КОШКИН.

Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх

38206 лав тислĕк кăларнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, январĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсем вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăхра чылай ĕçсем турĕç. План тăрăх 10 кун хушшинче 24.000 лав тислĕк кăлармалли пулнă пулсан, 38.206 лав кăларнă.

Çав вăхăтрах кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, торф, кĕл хатĕрлесси юлса пырать. Уйăхлăхăн иртнĕ 10 кунĕ хушшинче 560 центнер кĕл, 340 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлемеллеччĕ, 302 центнер кĕл, 305 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ çеç хатĕрленĕ. Уйăмăнах торф хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Вунă кун хушшинче 1.200 тонна хатĕрлес вырăнне пурĕ те 803 лав кăна хатĕрленĕ. Фекали хатĕрлес, компост куписем тăвас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ-ха. Районри çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсемпе яхуçалăх специалисчĕсем çак удобренисен усси çинчен колхозниксене кирлĕ пек ăнлантарса паман.

«Шимар» колхозра çак иртнĕ вунăкунлăхра план тăрăх 360 лав тислĕк кăлармалла пулнă пулсан, кунта 800 лав ытла кăларнă. Афанасьев, Ефремов, Павлов колхозниксем тислĕк кăлармалли кулленхи нормăна 150—180-шар процент тултараççĕ. Кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас тĕлĕшпе колхоз правленийĕ кашни бригадăна, уйăм задани панă, бригадăсем звеносене, звенносем уйăм колхозниксен хуçалăхĕсене мĕн чухлĕ кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмаллине кăтартса панă. Колхозниксем çак заданисене лайăх пурнăçлаççĕ. Колхозĕпе пурĕ 27 центнер кĕл, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ. Çак колхозри Н. Павлов ертсе пыракан 1-мĕш бригада аван ĕçлет, вăл удобренисем кăлармалли графика ытлашшипех тултарса пырать, çав вăхăтрах ыраш тата клевер акнă вырăнсенче пурĕ 114 гектар çинче юр тытнă.

«Красный Порденер» колхозра кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен бригада (бригадирĕ Р. Петрова юлташ) тислĕк хатĕрлес тĕлĕшпе аван ĕçленине палăртмалла. Кунта кок-сагыз акнă вырăн пăлăм 743 лав тислĕк хатĕрлесе хунă.

Чылай колхозсенче вăкăрсемпе тислĕк турттараççĕ. Степан Разин ячĕпе тăракан колхозра 3 вăкăрпа тислĕк турттараççĕ. Кунта 10 кун хушшинче вăкăрсемпе 296 лав тислĕк кăларнă.

Районри колхозниксемпе колхозницăсем вырăнти удобренисем ытларах хатĕрлесе, вăйлă тырпул туса илессишĕн ăмăртăва ĕçлеççĕ.

(Хамăр корр.).

Торф—лайăх удобрени

ИШЛЕЙ, январĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри нумай колхозсем уйăхлăха лайăх хутшăнчĕç. Паянхи кун тĕлне 35.624 лав тислĕк, 384 лав торф уя кăларнă, 883 центнер кĕл, 397 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. «Правда» колхозра 1880 лав тислĕк кăларнă, 64 центнер кĕл, 23 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. «Красный пахарь» колхозра 630 лав тислĕк кăларнă. Кунта икĕ вăкăрпа тислĕк турттараççĕ. «Прожектор» колхозра уя тислĕк кăларас ĕçре 6 вăкăрпа усă кураççĕ. «Çĕньял» колхозра икĕ вăкăрпа ĕçлеççĕ тата виçĕ вăкăра кӳлсе çӳреме вĕрентеççĕ.

Районра уйăхлăха кирлĕ пек хутшăнман колхозсем те пур. «Янду», «Депутат» колхозсем иртнĕ çул начар тухăçлă тырпул туса илчĕç. Кăсал та кунта вăйлă тырпулăн начар кĕрешеççĕ. «Янду» колхоз çак вăхăта çитсе те 200 лав кăна тислĕк кăларнă.

Уйăмăнах районра торф кăларасси ситĕлеççĕр пулса пырать. Торф кăларнă çĕрте пĕтĕм районĕпе те 4 колхоз çеç ĕçлет. «Ишлей», «Первое августа», Папачин ячĕпе тăракан колхозсем кашниех 1.500-шер тонна торф хатĕрлемелле, вĕсем пĕри те çак ĕçе пурăнман. «Знамя победы» колхоз председателĕ В. Дубровин: пирĕн торфĕр пуçнех тислĕк кумай,—тесе лăпланса ларать. Çав вăхăтрах хăй тислĕм кăларассине те çителĕклĕ йĕркелемен. Уйăхлăхăн вунă кунĕ иртрĕ. Тислĕк, торф кăларас ĕçе кашни колхозрах пикенерех тытăнмалла.

В. ГУСЬКОВ.

* * *

ШАХАСАН, январĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх нумай колхозсенче ăнăçлă пырать. «Новая жизнь» колхоз 10 кун хушшинче хире 850 лав тислĕк кăларнă, 21 центнер кĕл, 22 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Çак колхозра вăкăрсене кӳлсе çӳреме вĕрентес тĕлĕшпе те лайăх ĕçлеççĕ. А. Петрова колхозница 5 вăкăра кӳлсе çӳреме вĕрентнĕ, халĕ вĕсемпе тислĕк турттараççĕ. «Активист» колхозра та уйăхлăхра 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 18 центнер кĕл пухнă, хире 503 лав тислĕк кăларнă. Калинин ячĕпе тăракан колхозра 41 лав фекали, 29 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Кунта уйăмăнах Архипов юлташ ертсе пыракан бригада лайăх ĕçлет. Вăл колхоз правленийĕ панă заданине ытлашшипех пурнăçласа пырать.

«Акатуй» колхозра 4 вăкăрпа тислĕк турттараççĕ. В. Васильев, Алексеев юлташсем кашниех вăкăрпа 10-шар лаа, хăш чухне ытларах та кăлараççĕ. Кунта уйăхлăхра лашасемпе тата вăкăрсемпе 950 лав тислĕк кăларнă.

«Молодой колхозник» колхозра хире тислĕк кăларма кашни бригадăрах уйăм звено тунă. Вĕсем хушшинче Сергеев юлташ ертсе пыракан звено уйăмăнах лайăх ĕçлет. Çак звено уйăхлăхра 26 центнер кĕл, 19 центнер фекали пухнă, 350 лав тислĕк кăларнă. Сергеев звенинче ĕçлекен Г. Филиппов, П. Васильев, Ф. Михайлова, Сергеева колхозниксем хире тислĕк турттарнă çĕрте ĕçлесе куллен 3—4-шар ĕçкунĕ тăваççĕ.

Уйăм колхозсенче уйăхлăха тинĕçлĕ пек хутшăнман-ха. «Янмурза» колхозра (председателĕ Козлов юлташ) уйăхлăх çинчен колхозниксене ăнлантарса паман. Çавна пула выранти удобренисем хатĕрлеме те тытăнман. Çак колхозра çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Çак вăхăта çитсе те вăрлăхсене сортласа пĕтермен.

В. ВЕСЕЛОВ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕнчен, Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен тата ВКП(б) Обкомĕнчен

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ, Халăх Комиссарĕсен Советĕ тата ВКП(б) Чăваш Обкомĕ Чăваш АССР халăх поэчĕ орденоносец НИКОЛАЙ ИВАНОВИЧ ПОЛОРУССОВ-ШЕЛЕПИ нумай вăхăт хушши чирлесе выртнă хыççăн январĕн 12-мĕшĕнче вилни çинчен тата унăн çемйипе пĕрле хурланни çинчен пĕлтереççĕ

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ПРЕЗИДИУМĔ.
ХАЛАХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕТĔ.
ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔ.

Чăваш Совет Писателĕсен Союзĕнчен

Чăваш Совет Писателĕсен Союзĕн Правленийĕ ССР Союзĕнчи Совет Писателĕсен Союзĕн членĕ, Чăваш АССР халăх поэчĕ орденоносец **Николай Иванович ПОЛОРУССОВ-ШЕЛЕПИ** нумай вăхăт хушши чирлесе выртнă хыççăн 1945 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче вилни çинчен тата унăн кил-йышĕпе пĕрле пĕтĕм чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔН ПРАВЛЕНИЙĔ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советĕ çапла йышăннă:

1. Чăваш халăх поэтне Н. И. Полоруссов-Шелепие пытарас ĕçе организацилеме çак юлташсенчен комисси тăвас: М. П. Макаров (председатель), А. А. Эсхоль, Н. Т. Васянка, К. Н. Чугунов, Н. И. Устинов, Л. Я. Агаков, С. А. Шумков.

2. Н. И. Полоруссов-Шелепие пытарма пухакан расходсене Чăваш АССР бюджечĕ шучĕпе туса ирттерес.

3. Н. И. Полоруссов-Шелепи арăмне Анна Григорьевна Полоруссова юлташа пĕр вăхăтлăха 5.000 тенкĕ укçа парас.

4. Н. И. Полоруссов-Шелепи çемйин членĕсене çакăн пек пенси памалла тăвас:

арăмне—Анна Григорьевна Полоруссова юлташа ĕмĕрлĕхех кашни уйăхра 100-шер тенкĕ,

внукне—Анатолий Алексеевич Кузьмина, внучкисене—Тамара Алексеевна Кузьминана, Клара Алексеевна Кузьминана, Роза Алексеевна Кузьминана, вĕсем ӳссе çитичченех, кашниннех уйăхсерен 100-шер тенкĕ.

5. Çĕрпӳри педагогика училищинче Полоруссов-Шелепи ячĕпе кашни уйăхрах 200-шер тенкĕ чухлĕ 2 стипенди памалла тăвас.

Н. И. Полоруссов-Шелепие пытарма тунă комисси пĕлтерни

Чăваш халăх поэтне, **Н. И. Полоруссов-Шелепие** 1945 çулхи январĕн 14-мĕшĕнче пытараççĕ.

Унпа январĕн 14-мĕшĕнче 11 сехетрен пуçласа 15 сехете çитиччен сывпуллашаççĕ. Тупăкĕ Чăваш Совет Писателĕсен Правленийĕн пӳлĕмĕнче пулать (Пичет Çурчĕ, 2-мĕш хут, 9-мĕш пӳлĕм).

Совет Союзĕ тăрăх

«ИВАН ГРОЗНЫЙ» ЯТЛА ÇЕНЕ КИНОКАРТИНА

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство комитетĕнче художествăлла-историллĕ «Иван Грозный» ятлă фильман пĕрремĕш серине пăхса тухнă. Сценари авторĕ тата картина лартаканĕ—Сергей Эйзенштейн.

Картинăна султалăк çурă хушши Алма-Ата ӳкернĕ. Çав вăхăтра темĕн чухлĕ çĕнĕ декорацисем тунă, вĕсем Хусан Кремлĕн станисене, Успенски соборăн ăшчикĕнне, Александровски Слободăна кăтартса параççĕ. Картинăна ӳкернĕ çĕрте темиçе пин çын хутшăннă. Иван Грозный ролĕне Сталинла преми лауреачĕ, республикăн халăх артисчĕ Николай Черкасов вылять. Фильмра санăн пекех театрсемпе кинофотудисен артисчĕсем—Бучма, Бирман, Пудовкин, Жаров, Целиковская, Абрикосов тата Мгебров выляççĕ.

Картинăра хăй вăхăтĕнче нумай вĕренмĕлли ăслă сăнсенчен пĕрин—Иван Грозныйăн сăн-сăпатне тата унăн государство ĕçĕсене кăтартса панă. Вырăс патши феодаллă князьсемпе боярсене хирĕç, Руçа ӳссе сарăлма чăмăртаракансене хирĕç кĕрешсе пынине кăтартнă.

Картинăн музыкине Сергей Прокофьев композитор сырнă.

«Иван Грозный» фильма сывăхри кунсенчех кăтартма пуçлаççĕ. (ТАСС).

ПЕТРОЗАВОДСК ХУЛИНЧЕ ЛЕНИНПА КИРОВ ПАМЯТНИКĔСЕНЕ ÇĔНĔРЕН ЛАРТНА

Петрозаводска тытса илнĕ хыççăн гитлерла оккупантсем Сергей Миронович Кирован бронзăран тунă памятникне Финляндие илсе каймă пулнă. Вăл памятникне халĕ Петрозаводска каялла илсе килнĕ те çĕнĕрен Киров площадне лартнă.

Хула варринчи площадьре гитлеровецсем салатса пăрахнă Ленин памятникне тепĕр хут вырнаçтарса лартаççĕ. Вăл памятникне Манизер скульптор тунă. (ТАСС).

ОДЕССАРИ ТЕЛЕФОН СТАНЦИЙИЕ ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАНА

Одессăра çĕкĕрен тунă телефон станцийĕ ĕçлеме пуçланă. Кăткăс аппаратурăн пĕр пайне, тăшмантан туртса илнĕ хатĕрсемпе усă курса, связистсем хăйсемех тунă. Çĕнĕ оборудовани Мускавпа, Киевпа тата ытти хуласемпе сыхăнса тăр семене нумай аванлатать. (ТАСС).

Зоемсен вылявĕ

Январĕн 10-мĕшĕнче Мускавпа зоемсен икĕ вылявĕ — Иккĕмĕш Пятилетка Зоемĕн (тăватăмĕш çулхи кăларăмĕн) 34-мĕш вылявĕ тата ССР Союзĕн Оборонине тĕрекетмелли Зоемĕн 29-мĕш вылявĕ пуçланă иртнĕ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 11-мĕшĕнче БУДАПЕШТ районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн БУДАПЕШТРА хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, хулан АНДЬАЛФЕЛД районне, Ракоши чугун çул станцине, «Пальччи» тата «Андраши» казармисене, чугун çул çинчи товар станцине, машинăсем тăвакан «Ганц Данубе» заводне тытса илнĕ, пĕтĕмпе 150 квартал йышăннă. Январĕн 10-мĕшĕнче БУДАПЕШТ хулинче нимĕçсемпе венгерсен 1.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

БУДАПЕШТРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă, тăшмана пысăк çухату кӳнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай участокенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 42 танкне çĕмĕрсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

Будапештра пирĕн çарсем тăшманпа хулă урамĕсенче çапăçнă. Советсен штурмлакан отрячĕсем тăшмана пĕр чарăнмасăр пыра-пыра çапаççĕ, гитлеровецсенчен квартал хыççăн квартал тасатса пыраççĕ. Тăшманпа çапăçса малалла куçса пырса, пирĕн çарсем хулан çурçĕр-хĕвелтухăç пайне пĕтĕмĕшпех тытса илнĕ, унта промышленность предприятийĕсем нумай йышăннă. Цемент завочĕшĕн уйăрмах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Старши лейтенант Шкред командир пулса ертсе пыракан подразделенири боецсем çĕрле тăшмантан чылай квартала тасатнă. Пĕр завода хĕвеланăçсенчен пырса атакăланă. Гитлеровецсем хытă хирĕç тăнă, анчах та вĕсене арканса тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн гвардейски подразделенисем Ракоши сортировка станцине хупăрласа илнĕ те ăна хӳтĕлекен тăшман гарнизонне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Çитĕнĕве малалла вăйлатса пырса, гвардеецсем Варошлигет паркне вăркăнса кĕрсе кайнă, халĕ вĕсем çав паркра çирĕлленсе ларнă нимĕçсемпе çапăçаççĕ. Хулан вăтаçĕртти пайĕнче пирĕн çарсем урам хыççăн урама тасатаççĕ. Дунай патне сыхăнса пырса, хупăрласа илнĕ унка хытăрах та хытăрах хĕстерсе пыраççĕ. Каялла чакакан тăшман çапăçу хирĕнче хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен виллисене, çавăн пекех тата хĕçпăшалпа вăрçă хатĕрĕсене нумай пăраха-пăраха хăварать. Пирĕн пĕр часть кăна куп каçиччен 400 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 5 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăнне пĕтерсе тăкнă. Çав чăсри боецсемех нимĕçсенчен 12 тупăпа миномет, 26 пулемет тата 3 боеприпас склачĕ тытса илнĕ.

Тыткăна лекнĕ нимĕçсемпе венгер салтакĕсем Будапештра хупăрласа илнĕ нимĕçсемпе венгерсен çарĕсен пурнăçĕ начарланнăçемĕн начарланса пыни çинчен каласа кăтартаççĕ. Нимĕçсен командованийĕ хăйĕн салтакĕсене шанмасть. Тыткăна илнисем çапла пĕлтернĕ: вĕсен подразделенийĕсен хыççăнче эсэсовецсен ушкăнĕсем тăнă. Эсэсовецсен ушкăнĕсене тыткăна парăнма тăнă салтак кашнинех вырăнтах пĕрсе пăрахма пăхкалă-нă.

* * *

Будапештран сурçĕр-хĕвеланăçнерехре гитлеран танкĕсемпе пехоти ирхине ирех пирĕн позицисене атакăлама тытăннă. Хăяр çапăçу пуçланса кайнă. Çапăçу вăхăтĕнче хăюлăр çӳллĕ вырăнсем темиçе хутчен те вăлăран алла куçнă. Каç пулса хиллĕ тăнăçлă совет чăсĕсем гитлеровецсене хăйсен малтанхи позицийĕсем çине хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшман çыннисен виллисем тата çĕмĕрсе тăкнă техника нумай вырăнсенче юлнă. Будапештран хĕвеланăçнерехре нимĕçсем икĕ енчен атакăлама тытăннă. Совет артиллерисчĕсем, бронебойщикĕсем тата пехотинецĕсем тăшмана хăватлăн пеме тытăннă. Темиçе сехет хушши пынă çапăçу хыççăн гитлеровецсен нрĕкçĕрех каялла чакма лекнĕ. Тăшман пехотинецĕсен хăшпĕр ушкăнĕсем пирĕн позицисем патне сывхарса çитнĕ, анчах вĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. Тулăмăр дивизийĕсем тăрăх, пирĕн çарсем 900 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшманăн 10 танкĕпе 7 бронетранспортерне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. 96 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Чехословакире. Қошице хулинчен хĕвеланăçнерехре, тăшман çапăçса разведка тума хăтланнă. Нимĕç пехотин пĕр отрячĕ тата 8 танк çĕрле пирĕн позицисем патнелле пыма тытăннă. Пĕр чăсри боецсем гитлеровецсене хăйсем патне сывăхах янă та вăйлăн пеме тытăннă. 6 танкне персе çĕмĕрнĕ. Унтан пирĕн подразделенисем хăйсем тăшмана хирĕç пырса çапнă та нимĕçсен отрядне арканса тăкнă. Нимĕçсен икĕ танкне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Чехословаки районĕсенче халăх Хĕрлĕ Çара тăр майпа та пулăшма тăрать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти шкулĕпе политшкулсенче

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Районри коммунистсен иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕнче пулса иртнĕ пухăвĕ марксизм-ленинизма вĕренессине лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă ĕçсем палăртса хăварчĕ. Çав ĕçсене пурнăçлас тĕлĕшпе сахал мар утăмсем тунă. Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче район центрĕнче парти шкулĕ ĕçлеме пуçларĕ. Унта 29 çын вĕренет. Шкулта занятисем план тăрăх—эрнере пĕрре пулса иртеççĕ. Шкулăн руководителĕ ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Н. Гладков юлташ занятисен расписанине туса хатĕрленĕ. Вĕрентекенсен ушкăнĕ 5 çынтан тăрать. Унта ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Н. Григорьев, райсовет исполкомĕн председателĕ И. Александров, М. Петров, А. Светлов юлташсем.

Парти шкулĕн пĕрремĕш занятийĕнче Сталин юлташăн доклачĕ тăрăх калаçу иртнĕ. Çак калаçура коммунистсем çулпуç докладне мĕнле вĕренни тĕплĕн палăрчĕ. Коммунистсем Р. Калиновский Н. Скворцов, С. Резник, Ф. Варзанов, А. Николаев, Н. Петров юлташсем занятисене тĕплĕн хатĕрленни курăнчĕ. Вĕсем Сталин юлташăн историллĕ докладне вĕренĕ чухне «Правда», «Комсомольская Правда» хаçатсенчи тата «Большевик», «Партийное строительство» журналсенчи материалсемпе усă кураççĕ. Конспектсене тĕплĕн сыраççĕ. Çавăнпа та вĕсем занятире активлăн туха калаçаççĕ, лекторсене ыйтусем чылай параççĕ.

Парти шкулĕнче ку тапранчен 5 заняти пулса иртнĕ. Çав занятисенче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» пĕрремĕшпе иккĕмĕш сыпăкĕсене вĕренсе пĕтернĕ. Унсăр пуçне, ĕнтĕне картти тăрăх тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнеки тăрăх виçĕ темăна лекцисем пулса иртнĕ. Тĕнчен политикăллă картти çинчен ВКП(б) райкомĕн агитацийĕпе пропаганда отделĕн заведующийĕ М. Петров юлташ вĕрентет. Унăн лекцийĕсене вĕренекенсем питĕ пысăк кăмăлпа итлеççĕ. Вăл лекцисене ирттерме тĕплĕн хатĕрленет. Юлашки занятире парткабинет заведующийĕ А. Светлов Сталин юлташ 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмах çинчен лекци вуларĕ. Историллĕ материалсене тĕплĕн илсе кăтартни вĕренекенсен кăмăлне карĕ. Лекцисене хатĕрленĕ чухне Светлов юлташ кирлĕ материалсене малтанах тупса хурать. Час-часах вăл Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе усă курать. Британи империйĕ çинчен калакан кĕнекесене вулать, Емельян Ярославский çырнă «Что несет фашизм крестьянству». Г. Александров çырнă «О текущем моменте Великой Отечественной войны» кĕнекесемпе тата «Большевик», «Спутник агитатора», «Партийное строительство» журналсемпе усă курать.

Парти шкулне çÿрекенсен вĕренес кăмăлĕ çав тери пысăк. Вĕренекенсенчен чылайăшĕ парти организацийĕсенче политшкулсен руководителĕсем пулса ĕçлеççĕ. Çапăла вара хăйсен пĕлĕвне татах та тăрăнлатаççĕ. Баранов юлташ Чапаев ячĕпе тăракан колхозри, А. Николаев юлташ Калăпри пуçламăш парторганизацисен политшкулĕсен руководителĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем кашнех 4 шар занятие иртереççĕ.

Хальхи вăхăтра районра политшкулсем пурĕ 10 çĕрте ĕçлеççĕ. Вĕсенче 117 çын вĕренет. ВКП(б) райкомĕн агитацине пропаганда отделĕн заведующийĕ Петров юлташ, парти шкулĕнче лекцисем вуланисĕр пуçне Албахтинĕри пуçламăш парторганизаци çумĕнчи политшкула ертсе пырать. Унсăр пуçне вăл çав ялти çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем хушшинче марксизм-ленинизм теорине пĕрěнмелли кружок организацине.

Анчах та коммунистсен вĕренĕвне ертсе пырас ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр коммунистсене вĕренĕве явăçтарман, уйрăмăнах пĕччен коммунистсен пĕлĕвне ÿстересси çителĕксĕр пырать.

С. ШАДИН.

Коммунистсем пур ĕçре те малта

Пирĕн колхозри парторганизацинчи коммунистсем хăйсен пĕтĕм ĕçне колхоз ĕçĕпе сыхăнтарса пыраççĕ. Коммунистсем колхозниксемпе колхозницăсене лайăх пример кăтартса ĕçлеççĕ. Çавна пула колхоз ялхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те вăхăтра туса пыçĕ. Государство умĕнчи пăрăсене пур енĕпе те сроккен тултартăмăр. Çĕршыва планран иртерсе 400 пат тĕштырă, 8 пин пăта яхăн пахча-çимĕçсем тата аш-какай патăмăр. Фронтовиксем патне парнесем ятăмăр. Пирĕн колхоз вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та ытлашшинех тултарчĕ.

Çак çитĕнÿсене эпир коммунистсем ертсе пынипе, вĕсем колхоз ĕçĕнче хăйсем тăрăшса ĕçленипе тума пултартăмăр. Колхозри коммунистсене пурне те отчетлă ĕçе партнă. Вĕсем колхоз председателĕ, бригадирсем, ферма заведующийĕсем пулса ĕçлеççĕ. Эпĕ 66 çулта, граждан вăрçи партизанĕ, халĕ пенсионер. Апла пулин те, колхозри ĕçрен юлмастăп. Вăл çитнĕ таран тăрăшса ĕçлетĕп, ытти колхозниксемпе колхозницăсене ĕçре хаваласа тăрăшатăп. Коммунистсемпе комсомолецсем колхоз ĕçĕнче малта пынине пула, дисциплина та кирлĕ вырăнта. Сăлтавсăр ĕçе тухманни е ĕçрен пăрăнни пирĕн колхозра çукпа пĕрех.

Парти организацине ÿстерес, лайăх колхозниксемпе колхозницăсене илсе ÿссе пырать ретне илес тĕлĕшпе те эпир тăрăшса ĕçлетпĕр. Отечественнăй вăрçă çулĕсенче эпир 9 çынна парти членне тата 11 çынна кандидата илтĕмĕр. Парти организацийĕ хăйсен ретне малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсене илсе ÿссе пырать, çакă вара колхозри коммунистсен авторитетне нумай çĕклерĕ.

Коммунистсене политика тĕлĕшĕнчен вĕрентсе ÿстерессине те куллен туса пыраççĕ. Сталин юлташăн историллĕ докладчĕпе приказне вĕренсе пĕтертĕмĕр, ăна кашни колхозника тĕплĕн ăнлантарса патăмăр.

Халĕ колхоз çитес çуракине хатĕрленет. Ку ĕçре уйрăмах коммунистсемпе комсомолецсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа иртерме хатĕрленеççĕ. Ку майпа кашни коммуниста уйрăм ĕç панă. Эпир, хамăр илнĕ обязательствăсене, хамăр умра тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçлас тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлетпĕр.

Г. МАТЮКОВ.

Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнга» колхозри парторганизаци секретарĕн заместителĕ.

Çар çыннисен çемьисене ĕçе вырнаçтарни

ВАРНАР. Вăрманпромхоз директорĕпе вăрман ĕçлекенсен профсоюз райкомĕ çар çыннисен çемьисене ĕçе вырнаçтарас, вĕсене пулăшас тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем тăваççĕ. Фронта кайнă работниксен арăмĕсене е вĕсен çемьинчи ытти çынсене вуншар çына ĕçе вырнаçтарнă. К. Арланова юлташа малтанах счетовод ĕçне вĕренме илнĕ. Халĕ вăл бухгалтер пулса ĕçлет. В. Кулчихина та, счетовода вĕренме кĕнĕскер, бухгалтер пулса ĕçлет. Е. Сизова—счетовод-кассир, Ф. Тихонова—счетовод, К. Топрикова—склад заведующийĕ, Р. Темышева — бухгалтер, Т. Крысова—кассир пулса ĕçлеççĕ.

Фронтовиксен çемьисене пурне те вылăх-чĕрлĕх усрама пулăшаççĕ.

Е. ВОЛКОВ.

Видинра вилнĕ совет воинĕсен ячĕпе памятник лартнă

СОФИЯ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 7-мĕшĕнче Видин хулинче (Болгари) Болкан çурутравĕ çинчен гитлерла оккупантсене хăваласа кĕларнă чухне 1944 çулхи кĕркунне паттăрăн çапăçса вилнĕ красноармеецсене хисеплесе лартнă памятнике уçнă. Памятнике уçнă çĕрте портфельсĕр министрĕ Добри Терпешев, пропаганда министрĕ Димо Казасов, Украинăри 3-мĕш фронт командованийĕн представителĕсем тата Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн представителĕсем пулнă. Ялавсемпе плакатсем çеклесе, 30.000 çын ытла пухăннă. Вăл ялавсемпе плакатсем çинче Болгари халăхĕ таванла Совет Союзĕпе унăн паттăр Хĕрлĕ Çарне тав туни çинчен калакан сăмахсем çырса хунă. Çар оркестрĕ Совет Союзĕпе Болгари гимнĕсене выляса панă. Саван хыççăн тупăсенчен персе салют панă.

Пропаганда министрĕ Димо Казасов хăйĕн сăмахĕнче ирĕклĕхе юратакан халăхсене гитлерла пусмăртан хăтарас ĕçре Хĕрлĕ Çар тата пĕтĕм совет халăхĕ мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен калана.

ПОЛЬШАН ИРĔКЕ КАЛАРНА ПАЙĔНЧЕ УКСА РЕФОРМИ ТУСА ИРТТЕРЕССИ СИНЧЕН ЙЫШĂННА ДЕКРЕТ

ЛЮБЛИН, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Люблинри хаçатсенче Польша республики йышăннă декрета пичетлесе кăларнă. Вăл декретра немĕç оккупантсене кăларнă «Краковри злотый» текен укçана улăштарма кирли çинчен калана. 1945 çулхи январĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа, теприне декретпа, асăннă укçа çÿреме чарăнать. 1945 çулхи февралĕн 28-мĕшне çитиччен вăл укçана казначействăна е банк предприятийĕсене кайса памалла. Финанс министрĕ кăтартса панă тăрăх, вăл укçана «Народовы банк Польски» текен казначей билечĕпе пуçма-пуçăн улăштарса илеççĕ.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТАРУ

ЛОНДОН, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен çапăлла пĕлтерет: Афины хулинче официальнăй вĕркене пĕлтернĕ тăрăх, Скоби генерала ЭЛАС представителĕсем хушшинче калăçусем пыраççĕ. Вăрçă ĕнтĕ чарса партăс тĕлĕпне вĕсем чылай пайтусем тăрăх калаçса татăлнă та ĕнтĕ.

ЛОНДОН, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Грецине акăлчансен çар колоннисем, танкĕсемпе бронемашĕсем малалла куçса пыраççĕ. Акăлчансен пĕр колонни Афины хулинчен 90 километр сурçĕр-хĕвеланăçнерехре лараккан Ларимна хули патне, тепĕр колонни —Коринф каналĕ патне çыхăнарĕ. Афины хулинче тата Пирей портĕнче лăпкă.

Скоби генерала ЭАМ делегацийĕ хушшинче çаплах калаçусем пыраççĕ.

ГЕРМАНИРЕ АПАТ-ÇИМĔÇ ÇИТМЕСТ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Провинцире тухакан гитлерла хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăç, Кăнтăр-хĕвелтухăç тата Хĕвеланăç Европăри оккупацинленĕ пуян ялхуçалăх районĕсем гитлеровецсен аллинчен тухса ÿкнĕ пирки халь Германире пурнăç апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен вывăрланăçемĕн йывăрланса пырать. «Дейче Фольксвирт-шафт» ятлă гитлерла журнал палăртнă тăрăх, 1945 çулта вылăх апачĕ 3 миллион тонна çитмест. Гитлерла хаçатсем нимĕç хресченĕсене вылăх апатне перекетлеме, сыснасемпе килти кайăк-кĕшĕке сахалтарах усрама чĕнеççĕ. Германире вак вылăхпа кайăк-кĕшĕк мĕн чухлĕ усрама юранине кăтартакан нормăсем çинчен закон кăларнă. Çав закона пурнăçа кĕртменнисене хытă айăплаççĕ. Ытлашши вылăх-чĕрлĕхе тата кайăк-кĕшĕке тытса илеççĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ÇАРЕСЕМ ЛУСОН УТРАВĔ ÇИНЕ АННА

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи союзниксен хĕпăшаллă вăйăсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернине парать. Унта çапла каланă: январĕн 9-мĕшĕнче ирхине Америка çарĕсем Лусон (Филиппин утравĕсем хушшинчи тĕп утрав) çине анна. Лингайен заливĕ çыранĕнче. Филиппин утравĕсем тĕп хули пулса тăракан Маниларан 120 миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, наступлени тумалли тăвата тĕреклетнĕ вырăн туни. Десант антарнă вăхăтра карапсем персе тăна тата сывлăшпан бомбăсем пăрахнă. Çапăçу вăхăтĕнче японецсен 79 самолетне, пĕр подводнăй лодкине, икĕ эсминецне тата ытти судносене те пĕтерсе тăкнă. Японецсем çакна кĕтмен пирки, Америкăн десант çарĕсем çухату нумай туман. Япони çарĕсем патне пулăшу, хĕпăшал илсе пыракан çулсене татнă.

АМЕРИКА КОРРЕСПОНДЕНЧЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ÇЕНЕ ВАРÇА ХАТĔРЛЕННИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспондĕнчĕ, Америкăн Бельгири çарĕсен штабĕ çумĕнче тĕраканскер, çапла пĕлтерет: нимĕç промышленникĕсем хăйсен капиталĕсене упраса хăварас тата тĕнчери виççĕмĕш вăрçă вăлли производство сарса ямасăр хатĕрленес шутпа хăйсен капиталĕсене ют çĕршывсене кăларма пуçланă. Гитлерла парти çак ĕçсене вăрттăн пулăшса пырать, мĕншĕн тесен çакă вăл унăн программин пĕр пайĕ пулса тăрать (Германие çĕнтернĕ хыççăн вăйсене упраса хăварас тени пулать). Корреспондент каланă тăрăх, капитала ют çĕршывсене кăлармалли çак планăсем вĕсем гитлерла политика çак тĕлĕшпе улшăнинне пĕлтереççĕ. Ку таранчен гитлеровецсем Германирен капитала урăх çĕршывсене кăларма чарса тăнă. Хальхи вăхăтра гитлеровецсем промышленникĕсене ытларах капитал кăларма пуçлăççĕ. Çапла майпа вĕсем хăйсене упраса хăварма тата хăйсен вăрçă хыççăнхи ĕмĕчĕсене пурнăçлама тăрăшаççĕ.

Çакăнпа пĕрлех, тет корреспондент, гитлеровецсем нимĕçсен пысăк завочĕсене нейтральнăй çĕршывсенче вăрттăн ĕçлекен техника управленийĕсем е тĕрлĕ бюрошĕсем организацилеме хушнă. Гитлерла вăрттăн агентствăсем нимĕç укçине тĕрлĕ пурăхсем туянаççĕ, çакăншăн вăл агентствăсем комисси шучĕпе 5 процент тупăш илеççĕ. Çакăнпа пĕрлех гитлеровецсем промышленниксене ют çĕршыв çыннисемпе çĕнĕрен сыхăнтарма тата пулас çĕнĕ вăрçăра Германие каллех пулăшма тултаракан картельсене палăртса хуртарма тăрăшаççĕ.

Будапештри лару-тăру

Немĕçсен Будапешт хулинчи командованийĕ çак çулхи январĕн 9-мĕшĕнче паян шифрлă телеграммăна, пирĕн çарсем ярса илнĕскерне, пичетлетпĕр.

«Виçĕ талăк хушши эпĕ сире илтмесĕп. Аттăраса çитрĕм, мĕншĕн тесен мана кашни сехетрех вилĕм кĕтсе тăрать. Çыхăну тытса тăрас тесе, мĕн тума пуррине çурне те тăваттăр. Пирĕн лару-тăру пятĕ качăлланса çитрĕ.

Офен Штольпи Пештра вырăссем çĕнĕ районсем йышăнчĕç. Ремхллац площадĕнче пирĕн валли тĕрлĕ хатĕрсем илсе килекен самолетсем анса ларатчĕç, халĕ çав площаде вырăссем туртса илчĕç.

Венгри командованийĕ Салашн патне ультиматум ячĕ: паянхи кунтан кая юлмасăр мĕн те пулин тăвасах пулать, унсăрăн эпир текех тытăнса тăма пултараймастпăр, терĕç. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйăсен верховнăй командованийĕн штабĕ январĕн 10-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Арден савăлăн çурçĕр флангĕнчи хăшпĕр участоксенче, пуринчен те ытлăрех Дошан хулинчен кăнтăртарахра, союзниксен артиллерийĕ тăшман танкĕсене персе тăнă. Юр тирăнипе çапăçма йывăр пулнă. Маркур хули тавралăшĕнчи вырăна тăшманган тасатнă. Союзниксен часĕсем Ларош хули еннелле наступлени туса пыраççĕ. Бастонь хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем, тăшманăн вăйăл укрепленийĕсене çĕнтере-çĕнтере, малалла кÿсса пынă. Римлинген районĕнче тата тăшман çарĕсен Анатри Вогез савăлăн районĕнчи Рейерсвейлерпа Лемберг патĕнче тăшман атакăсем тунă, анчах та вĕсем пăчăнса ларнă.

Рейн шывĕ улăхĕнче Хагенау вăрманĕнчен çурçĕртерехре тăшман танкĕсем пулăшипе вăйăл атака тунă, союзниксен çарĕсем атакăна сирсе янă. Тăшманна пысăк çухатусем кÿнĕ, вара вăл çурçĕрелле чакнă. Союзниксем Рейн районĕнче хăшпĕр çитĕнÿсем тунă, вĕсем Гамбохейм кулине çĕнĕрен йышăннă.

Страсбург хулинчен кăнтăртарахра тăшман январĕн 7-мĕшĕнче тунă çитĕнÿсене вăйлатма хăтланнă. Союзниксем Босхфюхейм хулинчен тухса кайнă.

Вогез районĕнче, Кольмар хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем пĕр кÿллĕ вырăна йышăннă. Тăшман çарĕсем Мюлуз хĕрринче тунă атакăна союзниксем сирсе янă.

Начар çанталăк пулипе союзниксен авиацийĕ вăйлах кĕрешеймен.

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕпăшаллă вăйăсен штабĕ январĕн 10-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Италире çанталăк начар тăнă пирки союзниксен çарĕсем 5-мĕш армин участокĕнче те, 8-мĕш армин участокĕнче те вăйлă кĕрешеймен.

ЛОНДОН, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйăсен верховнăй командованийĕн штабĕ январĕн 11-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Арден савăлăн çурçĕр флангĕнче союзниксен çарĕсем Сальм шывĕн хĕвеланăç хĕррине Сальм-Шато патне çитичченех тăшмантан тасатнă.

Унтан хĕвеланăçнелле союзниксен часĕсем каялла чакакан тăшмана хăваласа пынă. Ходистер хулине йышăннă. Союзниксен патрулĕсем Ларош хулине Марш хули кушшинчи çул çине тухнă. Марш хулинчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Омм шывĕ урлă каçнă та Амблн хулине йышăннă. Тăшман кунта качар хирĕç тăрать.

Арден савăлăн кăнтăрти флангĕнче хаяр çапăçусем хыççăн союзниксем Тилье хулине йышăннă. Союзниксен часĕсем Бастонь хулинчен 4 миля çурçĕртерехре лараккан пунктсем патне çитиччĕ. Реконь хулине тытса илнĕ.

Бастонь хулинчен кăнтăртарахри тата хĕвелтухăçнерехри секторта тăшмантан Виллер-ла-Бонн-О тата Арланж пункчĕсене тасатнă. Кунтан хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Берле хулине йышăннă. Союзниксем часĕсем Фламьерж хулинчен туха кайнă.

1.100 йывăр бомбардировщик ытла, 300 истребитель хÿтĕлесе пынипе, Хĕвеланăç Германири кĕнерсене, сортировка станцийĕсене тата аэродромсене тинăнă, çапăн пекех тата Германипе Бельги чиккинче Арден савăлăн никĕсĕ патĕнче шоссе çулĕсен кĕперĕсемпе узелĕсем çине те бомбăсем пăрахнă.

Саарбрюккен хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем, вăйăлах хирĕç тăман тăшмана çĕнтерсе, Гетиген хулине кĕрсе кайнă. Çавăн пекех тата тăшманăн Анат Вогезри савăлăн хĕвелтухăç енĕнче те хăшпĕр çитĕнÿсем тунă.

Рейн шывĕ улăхĕнче Гагенау вăрманĕнчен çурçĕртерехре (Страсбург хулинчен çурçĕртерехре) çапăçусем çаплах Гаттен хулинче пыраççĕ.

Кунта январĕн 10-мĕшĕнче тăшманăн наступлени туса пыракан çарĕсене каялла хăваласа тытăннă.

Эльзас тÿремĕнче, Страсбург хулине Кольмар хули хушшинче, тăшман атакисене сирсе янă.

ЛОНДОН, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕпăшаллă вăйăсен штабĕ январĕн 11-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Италире 5-мĕш армипе 8-мĕш арми тăракан вырăнсенче патрульсем çе; кĕрешĕнĕ.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Хĕвелтухăç Боснире Челич-Корай секторĕнче тĕллеп-тĕллĕн çапăçнă. Сăртлă Озрен районĕнче Югослави часĕсем кунти вырăна тĕшман юлашкийĕсенчен ăнăçлăн тасатаççĕ.

Власеница секторĕнче çаплах çапăçусем пыраççĕ. Босна шывĕ улăхĕнче Зеница. Бисоко-Тарчин хулисен секторĕнче нимĕçсен часĕсем юлашки икĕ кун хушшинче Травник хули патнелле тата кĕме хăтланнă. Югослави часĕсем нимĕçсен атакисене пурне те сирсе янă. Вара, малалла кÿсса, тăшмăнăн Крешево ятлă вăйăл тĕреклентĕ пунктне йышăннă.

БЕЛЬГИ ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ ЧЕРЧИЛЛЬПЕ ТАТА ИДЕНПА ТЕЛ ПУЛСА КАЛАÇНИ

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бельги премьер-министрĕ Пьерло паян ирхине, Англире пулнă хыççăн, Лондона тавăрăнă. Бельги посолĕ патĕнче апатланнă вăхăтра вăл Черчилльпе тата Идеппа калаçнă.

АМЕРИКА КОРРЕСПОНДЕНЧЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ÇЕНЕ ВАРÇА ХАТĔРЛЕННИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспондĕнчĕ, Америкăн Бельгири çарĕсен штабĕ çумĕнче тĕраканскер, çапла пĕлтерет: нимĕç промышленникĕсем хăйсен капиталĕсене упраса хăварас тата тĕнчери виççĕмĕш вăрçă вăлли производство сарса ямасăр хатĕрленес шутпа хăйсен капиталĕсене ют çĕршывсене кăларма пуçланă. Гитлерла парти çак ĕçсене вăрттăн пулăшса пырать, мĕншĕн тесен çакă вăл унăн программин пĕр пайĕ пулса тăрать (Германие çĕнтернĕ хыççăн вăйсене упраса хăварас тени пулать). Корреспондент каланă тăрăх, капитала ют çĕршывсене кăлармалли çак планăсем вĕсем гитлерла политика çак тĕлĕшпе улшăнинне пĕлтереççĕ. Ку таранчен гитлеровецсем Германирен капитала урăх çĕршывсене кăларма чарса тăнă. Хальхи вăхăтра гитлеровецсем промышленникĕсене ытларах капитал кăларма пуçлăççĕ. Çапла майпа вĕсем хăйсене упраса хăварма тата хăйсен вăрçă хыççăнхи ĕмĕчĕсене пурнăçлама тăрăшаççĕ.

Çакăнпа пĕрлех, тет корреспондент, гитлеровецсем нимĕçсен пысăк завочĕсене нейтральнăй çĕршывсенче вăрттăн ĕçлекен техника управленийĕсем е тĕрлĕ бюрошĕсем организацилеме хушнă. Гитлерла вăрттăн агентствăсем нимĕç укçине тĕрлĕ пурăхсем туянаççĕ, çакăншăн вăл агентствăсем комисси шучĕпе 5 процент тупăш илеççĕ. Çакăнпа пĕрлех гитлеровецсем промышленниксене ют çĕршыв çыннисемпе çĕнĕрен сыхăнтарма тата пулас çĕнĕ вăрçăра Германие каллех пулăшма тултаракан картельсене палăртса хуртарма тăрăшаççĕ.

Н. И. Полоруссов-Шелепи

1945 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче, Шупашкарта, йывăр чирлесе выртнă хыççăн, чăваш халăх поэчĕ, орденоносец Николай Иванович Полоруссов-Шелепи вилсе кайрĕ.

Николай Иванович Шелепи вилнипе—чăваш халăхĕпе чăваш литературишĕн пысăк çухату.

Чăваш халăхне çутта кăларас тесе, тăван культурăна тăван поэзие аслă çул çине кăларас тесе, Николай Иванович Шелепи илемлĕ литературăра çĕрĕк çул хушшинче мăнукăнми ĕçлерĕ.

Октябрьти Социалистлă Аслă Революциччен Шелепин пурнăçĕ йывăр та хĕсĕк пулнă, ăна ялти шкул пĕтерсе тухма та май пулман. Сахал вĕренсе пулнă те, Шелепи çуттăлла турăшă, 1905 çултах вăл çатăа самаинне хирĕç сăмăн-юрăсем çырнă.

Унăн «Сĕлен» тата «Рассвет» ятлă малтанхи сăввисене вулакансем лайăх пĕлеççĕ. Патша правительстви Шелепине çак хăюллă сăвăсемшĕн хĕсĕрленĕ, çавăнпа та унăн 1910 çулсенче Çĕнĕре тарса, пытанса пурăнмалла пулнă.

Шелепин пысăк таланчĕ Россия халăхĕсемпе пĕрле чăваш халăхĕ ирĕке тухсах тин аталанса ÿссе каять. Шелепин кĕнеке хыççăн кĕнеке тухма тытăнать, унăн чапĕ тăван халăх хушшинче сарăлать. Шелепи чăваш халăхĕн, уйрăмăнах шкул ачисен юратнă поэчĕ пулса тăрать.

Литературăра пысăк çитĕнÿсем тунăшăн ăна 1936 çулта Чăваш республикин правительстви чăваш халăх поэчĕн ятне парать. 1938 çулта СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ «Знак почета» орденпа наградалать.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Шелепи уйрăмăнах хавхаланса ĕçлерĕ, фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяр сăвă-юрă сырчĕ. Вăрçă пуçланнăнах вăл чăваш поэчĕсенчен пурринчен малтанах «Тăршшĕ ик метр, урлаш—пĕрре тертори кирлĕ Гитлере» тесе сырчĕ. Юлашки вăхăтра сырнă сăвăсиченех вăл этемлĕх тăшманне—юнлă нимĕç фашисчĕсене пĕтĕм чун курайманлăхĕпе ылханчĕ, халăхсене чĕре кăларакан Хĕрлĕ Çара, аслă совет халăхĕне аслă Сталина пĕтĕм чун хаваленĕ мухтавĕ. Хăй 65 çула кайнă пулин те, куçсăр пулин те унăн чĕри яланах çамрăкчĕ, вăл часах-часах заводсемне фабрикăсене кайса, колхозсене тухса, шкулсене пырса литературăра вечерĕсем ирттеретчĕ, тăтăшах радиопа кĕрÿллĕ сăввисене вулатчĕ.

Тĕван халăхпа тăван литературăран Николай Иванович Шелепине вилĕм алли вăхăтсăр уйăрчĕ. Унăн сырас кăмăлĕ аслăчăчĕ, ĕмĕчĕсем çутăччĕ, вăл вăрçă пĕтиç сахăнĕллă куна халăхпа пĕрле кĕтсе илеш-ленчĕ. Çĕнĕрен те çĕнĕ сăввăсем, çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерÿ юррисем çырасшăнччĕ...

Тăвру çăмăл пултăр, хаклă Николай Иванович! Эсĕ туса хăварнă пархатарлă ĕç ĕмĕр-ĕмĕрех чăваш халăхĕ хушшинче пурăнĕ, сан мухтавлă ятна тăван халăх нихăçан та манмĕ.

С. Эльгер, А. Эсхель, Л. Агаков, С. Шавлы, К. Чулгась, Ф. Укр, И. Максимов-Кошкинви, П. Н. Осипов, Н. Айзман, П. Золотов, К. Сергеев-Турхан, Н. Васянка, Иван Мучи, И. Малгай, Б. Алексеев, И. Молодов, Ю. Зайцев, М. Спиридонов, Г. Хирбю, Ф. Лукин, Г. Лисков, В. Воробьев, Е. Токмаков, Вал. Яковлев, И. Салам-бек, М. Титов.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Государство Издательствин ватă писатель, Чăваш халăх поэчĕ

Николай Иванович ПОЛОРУССОВ-ШЕЛЕПИ

вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

Чăвашгосиздат.

Шупашкарти электромеханически техникумра техникум курсĕшĕн экстернат йĕркипе экзамен пама пуйтса çырнă заявленисене йышăнаççĕ.

Заявленисене вăтам шкулта çичĕ çулта кая мар вĕреннĕ тата производствăра икĕ çултан кая мар ĕçленĕ çынсенчен пуринчен те йышăнаççĕ. Заявленисене çулталăк тĕршшĕпех йышăнаççĕ.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82.

5—5

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленине çакăн пек работниксем васкавлăн кирлĕ: главнăй бухгалтер, главнăй бухгалтер заместителĕ, старши диспетчер, машинистка, шофер тата киноаппаратурăна юсакан мастерсем. Главнăй бухгалтера апат-çимĕç литер йĕркипе параççĕ. Çак адреспа пуйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Кинотеатр, отдел кадров Управления кинофикации.

Лашасене пăхса тухни мĕн кăтартрĕ

Ялхуçалăхĕнче тата хуçалăхри ытти ĕçсенче те лаша пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк. Çавăнпа та эпир лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçе лайăхлатас тесе чылай ĕçлерĕмĕр. Лашасем мĕнлине пăхса тухма эпир районра ятарласа 4 комисси турăмăр. Комисси членĕсен шутне районри ответлă работниксемпе ялхуçалăх специалисчĕсене кĕртрĕмĕр. Лашасене инçене хăвалас мар тата колхозри ĕçрен нумай вăхăта уйăрас мар тесе, районри колхозсен лашисене 8 çĕрте пăхса тĕрĕслерĕмĕр.

Чĕн малтанах, комисси членĕсене вĕсем умĕнче тăракан практикăллă задачăсемпе паллаштарас шутпа, 4 комиссин ĕçне пĕр колхозра туса ирттертĕмĕр. Ун хыççăн вара комиссисен членĕсем хăйсене уйăрса панă колхозсенчи лашасене пăхса тухма уйăрăм пунктсене кайрĕç.

Комисси членĕ кашни лашана çак енчен пăхса тухать: лаша мăнтăр-и, таса-и, ăна чунсăррăн пăхса суранлатса пĕтермен-и. Çаксемпе пĕрлех хăмĕтсем тата ытти уттаврашсем юсавлине, çуна мĕнлине тата лашапа килнĕ ездовойăн çак лашапа çÿрес. ме пĕлĕ удостоверени пуррине тĕрĕслесе тухать.

Лашасене пăхса тухнă хыççăн, комисси лашасене илсе килнĕ çынсемпе тата колхоз председателĕсемпе канашлу туса пыраççĕ, унта лашасене пăхса тухнин итогĕсене сÿтсе-явать.

Çакăн пек йĕркелерĕмĕр эпир лашасене пăхса тухас ĕçе.

Лашасене пăхса тухнин итогĕсене ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче те сÿтсе-явнă. Çак ĕçе лайăхрах туса ирттерме конкретлă мероприятисем палăртнă.

Уйрăм колхозсем лашасене пăхас тата вĕсемпе тĕрĕс усă курас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. «Красный Октябрь» колхоз лашисем мăнтăр та вăйлă. Вĕсене вăхăтра çитереççĕ, тасатса тăраççĕ. Кунта старши конюх пулса 1932 çултанпа Печников юлташ ĕçлет. Ăна çак ĕçе юратса тунăшăн «Отличник социалистического земледелия» значокпа тата Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградаланă. Çак колхозра пăхнă 58 лашараан мăнтăрсем 28, вăтаммисем 30 шутланаççĕ. Чирлисем е суранлисем пĕрре те çук. Çавăн пекех «Звезда» тата «КИМ» колхозсенче те лашасене юратса пăхаççĕ.

Анчах та лашасене пăхса тухни колхозсенче ырхан тата вăйсăр лашисем нумайăшне, лашасене кÿлсе çÿремелли инв